# ПАЛЛАШĂР: ВЛАДИМИР АГЕЕВ

Чăваш халăх художникĕн, К. В. Иванов ячĕпе хисепленекен Чăваш ССР патшалăх преми лауреачĕн Владимир Иванович Агеев ячĕ ачасемшĕн те паллă. Вăл «Хатĕр пул», «Ялав», «Тăван Атăл» журналсенче пичетленнĕ чылай повеçсемпе калавсене илемлетрĕ, халĕ те туслă вĕсемпе. «Чăваш халăх халапĕсене», «Чăвашла-вырăсла словаре» тата ытти кĕнекесене те вăлах илемлетнĕ.

1967 çулта эпĕ Чăваш пединститучĕн художествăпа графика факультетне вĕренме кĕме шутларăм. Шикленетĕп хам. Мĕн тумалла? Шăп кăна çав çулхине Владимир Агеев шăллĕсем, Александрпа Анатолий йĕкĕрешсем, çакăнтан вĕренсе тухса, Елчĕке таврăннăччĕ. Вара унта çул тытрăм. Чи малтан çавăнта куртăм паллă ăста хăй аллипе тунă, килĕнче упранакан картинисене ,оригиналсене. Эпĕ тĕлĕннипе хăраса ӳкрĕм: çук, çук, манран ĕмĕрне те капла ӳкерме вĕренесси пулмасть. Лăплантарчĕç мана унăн шăллĕсем, тин пиççе çитнĕ сăпас панулмиййепе кунтăк, чӳлмек лартса пачĕç те, атя, ӳкер терĕç. Ĕçрен ан хăра, вăл хăй санран хăратăр тени тĕрĕсех иккен.

Тен, Владимир Ивановичăн та пулнă малтанах шиклĕх? Анчах унăн кунçулне аван пĕлетĕп те, татсах калама пултаратăп: Аккей йăхĕнче пултаруллă çынсем пайтах. Акă, аслашшĕ, Аккей Мĕкĕти — чаплă алă ăсти, сехет юсавçи. Пĕрремĕш тĕнче вăрçинче хут вĕренсе кайран тиечука тухнă, Хусанта почтăра ĕçленĕ, пуян библиотека пухнă. Ашшĕ, икĕ тĕнче вăрçин паттăрĕ, чаплă вăйăçă, фотограф. Амăшĕ те, колхозница, çак ĕçпе тимленĕ. Пурте сăнарлă искусствăна лайăх ăнланнă, ачисен те илемлĕх туйăмĕ ир вăраннă. Çавăнпа та ашшĕпе пĕр тăван Майкка аппăшĕн ывăлĕ Мурзакаев Энтрюш хăй тĕллĕн вĕреннĕ художника тухнинчен тĕлĕнмелли çук. Шăпах ăна пĕрремĕш вĕрентекенĕ тесе шутлать В. И. Агеев. Мурзакаев 30-мĕш çулсенче Елчĕкре хăй ӳкерчĕкĕсен выставкине йĕркеленĕ.

Çапла ĕçчен, туслă, йышлă çемьере 1932 çулхи ака уйăхĕн 2-мĕшĕнче çут тĕнчене килнĕ пулас художник.

Юнран кăна пымасть пуль художник таланчĕ. Тем тесен те, турă пӳрни, çутçанталăк пани те кирлĕ. Акă, сăмахран, ăçтан килет-ха художникăн аваллăха, юмах тĕнчине кăмăлласси? Аслă Елчĕкре вĕсен килĕ Йĕрĕх варĕ çывăхĕнче (унта Киремет хурами ӳснĕ) ларнă. Сухана тухсан кунта 18—19 ĕмĕрсенчи вак укçасем, кăкшăм-чӳлмек ванчăкĕсем тупнă. Килĕнче ака-суха, хăна юррисене итлеме юратнă вăл. Пĕр уявран, улахран, вăййаран, акатуйран юлман. Пăла улăхне лашасемпе выртмана çӳренĕ. Çак чĕрĕ сăнлăхсем манăçми ӳкерчĕксем пулса юлнă та унăн асĕнче.

Художникăн ачалăхĕ те, яшлăхĕ те йывăр килнĕ. Тен, çавăнпах эпир унăн чылай ĕçĕнче синкерлĕх (трагизм) сĕмне витĕр куратпăр.

1948 çулта çуран Шупашкара çитет вăл. Художество училищине вырнаçать. Хальхи çамрăксемшĕн тĕлĕнмелле пулĕ те, анчах çаплах пулнă ун чухне: стипендисĕр, выçăллă-тутăллă пурăннă, çын çине тух ма тумтирĕ те çук. Уроксем хыççăн хуралçă училищĕрен хăваласа кăларнă та вĕсене, вара çĕрле, чӳречерен кĕрсе, шкапсенче, сĕтел çинче çĕр каçнă.

Мĕнпур вĕрентекенрен вăл чи малтан Н. К. Сверчкова асăнать. Унăн çутă пултаруллăхĕ, халăх пурнăçне лайăх пĕлни килĕшнĕ ăна. Татти-сыпписĕр, хавхаланулла ĕç. Ӳсĕм тӳрех килмест. Кайран тата виçĕ çул Совет Çарĕ, çавăн чухлех ялти шкулсенче ачасене вĕрентет. Ахальтен мар ĕнтĕ вĕсен тĕнчине, психологине тарăннăн ăнланать.

Чăваш искусствин малашлăхри çĕкленĕвне шанать вăл. Халăх чунĕ чĕлхере кăна мар, унăн искусствинче те. Çавăнпа та культурăна çĕклессине чи малтан вĕрентес ĕçре курать. Суйса, тĕрĕс мар воспитани памалла мар, чи малтан çынлăха вĕрентмелле. Çак ĕçре тĕн вырăнĕ те пысăк. Çавăнпа та ĕнтĕ чăваш халăхĕн аваллăхи ĕненĕвне, ăсталăхне, йăлийĕркине, искусствине тĕпчемелле, çĕнĕрен чĕртмелле. Пĕрре çапла унпа пĕрле темиçе художник Елчĕк районĕнчи Çирĕклĕ Шăхальне вăйă курма кайрăмăр. Мĕн чухлĕ ӳкерчĕ юррисене çырса илчĕ вăл, тĕлĕнчĕ, эрленчĕ — çак илем кайса, пĕтсе пынăшăн çерем çине выртса йĕменни кăна.

Ытла пысăк калăплă картинăсене хапăлламасть художник. Историллĕ жанрпа ту





Автопортрет. 1987 ç.

ĕçĕсем те пысăках марччĕ унăн. Ытларах графика ярăмĕсемпе тимлетчĕ унчченрех. Халĕ пăхатăп та — чăваш халăхĕн аваллăхĕпе, ырă йăли-йĕркипе ӳкернĕ мĕн чухлĕ ĕç çуралчĕ юлашки çулсенче! Мĕншĕн тесен астăвăмсăр халăх пĕтет. Иртнĕ çул Кĕçтенттин Ивановăн 100 çулне чаплăн паллă турăмăр. Çак юбилея хăйне кура пысăк парне хатĕрлерĕ вăл: поэт ячĕпе хисепленекен литература музейĕ валли çуллă сăрăпа «Тăхтаман» ятлă 15 тăваткал метрлă диорама ăсталарĕ.

Унăн 20 ытла ĕçне СССР тата РСФСР художниксен союзĕн выставкăсен дирекцийĕ илнĕ. Темиçе çул каялла Лейпцигра «Мĕнпур тапхăрсемпе халăхсен художникĕсен пĕтĕм тĕнчери лексиконĕ» ятлă кĕнеке пичетленсе тухрĕ. Унта В. И. Агеевăн халăх мифологийĕпе ӳкернĕ ĕçĕсене те кĕртнĕччĕ. Тата «Пĕтĕм тĕнче энциклопедине», «Чăваш АССРĕ» текен уйрăма уçса пăхар-ха: унта та паллă художникăн «Вăйă» литографийĕ тĕл пулĕ.

Çапла, ячĕ те, сумĕ те пур ăстан. Анчах нихçан та чапшăн хыпса çунман вăл. Халăхăн кăмăлне ăша хывса, чи пархатарлă йăли-йĕркисене тĕпе хурса ĕçлет художник.

Василий ЭКТЕЛ.

# Эпĕ йăнăшрăм, асту:
# Эс çав йăнăша ан ту!

ЭХ, МĂНТАРĂН АЧАЛĂХĔ... Мĕншĕн аслисене итлеместĕнши эсĕ! Сана: «Ун пек тума юрамасть, кун пек тумалла»,— тесе вĕрентессĕ. Эсĕ вара хăлхана та чикместĕн. Аслисем сана тĕслĕх илсе кăтартассĕ: «Ав, кӳршĕри Мишша, пирус туртса, кĕçех пӳртне çунтарса ятчĕ, хăй те çунса каятчĕ». Çук, çын йăнăшĕ те витмест сана, çав-çавах, килтисенчен пытанса, пирус чĕртетĕн.

Ялта çын йăнăшĕ уйрăмах лайăх курăнать: пĕри, вăрланăшăн, тĕрмене ларнă; тепри, эрех нумай ĕçсе, хĕрĕхрех çĕре кĕнĕ.

Ачасем, атьăр-ха, халех, ӳссе çитиччченех, çын йăнăшĕсене курма, вĕсене тишкерме вĕренер. Лайăхрах асра юлтăр тесе уйрăм тетраде çырса та пырар-и, тен. Тĕллевĕ пирĕн пĕрре: çав йăнăшсене нихçан та тăвар мар.

Эпир сире кашни номертех пурнăçран илнĕ пĕр-ик тĕслĕх каласа парăпăр. Эсир те пире хăвăр тĕслĕхĕре çырса пĕлтерĕр, журналта пичетлĕпĕр. Çапла вара çын йăнăшĕ пире пурне те тĕрĕс пурăнма вĕренттĕр.

### Ача йăнăшĕ

Шупашкарти пĕр шкулта вĕренекен Алеша К. çилĕм шăршлама хăнăхнă. Пĕрре шăршланă, тепре, хăй сисмесĕрех токсикоман пулса тăнă.

Пĕррехинче Алеша шкултан таврăннă та, пуçне çилĕмлĕ целлофан хутаç тăхăнса, диван çине таяннă. Минресе выртнă-выртнă та хăй сисмесĕрех çывăрса кайнă. Амăшĕ ĕçрен таврăннă çĕре вунтăватă çулхи ывăлĕ çилĕм шăршипе наркăмăшланса вилнĕ.

— Эх, ухмах, — урăх сăмах тупаймарĕç пытарма пынă тантăшĕсем.

### Аслисен йăнăшĕ

Пĕр пĕчĕк ялта ватă карчăк вилнĕ. Колхоз правленийĕ тупăк тутарнă. Тупăка леçме тата пытарнă çĕрте пулăшма икĕ вăйпитти арçынна машинпа сакăр çухрăмри яла кайма хушнă. Пĕр арçынни шоферпа юнашар ларнă, тепри — çӳле, кузова. Пыраççĕ хайхисем. Кĕç çумăр çума пуçланă. Çӳлте ларакан арçынни нумай шухăшласа тăман — кĕнĕ те выртнă тупăка, хуппине те витсех хунă. Мĕн йĕпенес! Пырсан, пырсан тĕлĕрсех кайнă. Çул çинче шофер кузова тепĕр икĕ арçынна лартнă. Тупăкпа юнашар кусем шăппăн калаçкаласа пынă. Çав вăхăтра çывăраканни вăраннă та тупăк хуппине кăшт çĕклесе: «Çумăр чарăнчĕ-и!» — тесе ыйтнă. Арçынсем сехĕрленсе ӳкнĕ, çухăрса янă, ним шухăшласа тăмасăр пысăк хăвăртлăхпа пыракан машина çинчен ик еннелле сикнĕ. Карчăка пытарма каякансен ирĕксĕрех çулне улăштарма тивнĕ, аманнă арçынсене район больницине леçнĕ.

Хаклă вулаканăмăрсем! Эсир çакăн пек пăтăрмаха лекес пулсан, мĕн тунă пулăттăр! Çырăвăрсене кĕтетпĕр. Конверт çине кĕскен «Çын йăнăшĕ» тесе палăртма ан манăр.